ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

29 (4443) №, 2015, июль (утă), 16

(1931 çулхи январĕн (кăрлачăн) 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.

Индексĕ: 54802.

ПАТТĂРЛĂХ

## Пирĕшти пуль эсĕ, Кирилл...



**Çуллахи илемлĕ вăхăт кама килĕшмĕ-ши? Кашниех çак самантра яла туртăнать. Уçă сывлăш, пахчара ĕçлени, шыва кĕме кайни – хăйне евĕр савăнăç.**

Канаш хулинче пурăнакан Сергейпа Татьяна Яковлевсем те яланах ял пурнăçне кăмăлланă. Çавна май час-час тăван тăрăхне васканă. Кăçал та яланхиллех ачисемпе Канаш районĕнчи Шаккăлта çу кунĕсене ирттерес тĕллевлĕ пулнă.

Ялта йăлтах аван темелле, анчах ĕç çукки, сахалли е çитсе пыманни кашниех ура хурать. Çемье вара укçа-тенкĕсĕр ниепле те пурăнаймĕ. Тĕпренчĕксене тăхăнтартмалла, апатлантармалла. Çавăнпа Яковлевсем те кашни ир, ачисене киле хăварса, ĕçе васканă. Кил хуçи Канашра, унăн мăшăрĕ Комсомольски салинче вăй хунă.

Июль уйăхĕн 11-мĕшĕ. Шăматкун. Яковлевсем тутлăн çывăракан ачисене юратса пăхнă та яланхиллех ĕçе васканă.

...Чи кĕçĕнни, тăваттăри Кирилл, куçĕсене сăтăркаласа картише тухнă. Ашшĕпе амăшне шыракаласа ун-кун пăхкаланă. Çывăх çыннисем килĕнчен тухса кайнине ăнланса илнĕ вăл. Сасартăк сарай тăрринчен сĕрĕм йăсăрланнине асăрханă. Кĕçех таврана çунăк шăрши сарăлнине туйнă. «Кун пеккине эпĕ сенкер экранпа курнăччĕ пĕррехинче... Пушар!» – тесе хыпаланса çывăракан пĕртăванĕсене вăратма васканă...

Çулăм вăйлах алхасма тытăннă, сарай çинчен пўрт еннелле кармашма тытăннă. Сехĕрленнĕ кўршĕаршă пушар хуралне пулăшу ыйтса шăнкăравланă. Çăлавçăсем çул çинче чухне ял халăхĕ çулăм вăйне чакарас тесе витрепе шыв йăтнă. «Хĕрлĕ автана» çĕрпе те сапнă. Сасартăк тахăшĕ: «Хуçалăхра газ баллонĕсем пур!» – тесе кăшкăрнă.

Кĕçех пушар хуралĕнче ĕçлекенсем çитнĕ, тăхтамасăр пушарпа кĕрешме тытăннă. Пурте пĕрле кар тăнăран çулăма парăнтараççех.

...Паян пĕчĕк çăлавçăна пурте: "Пирĕшти пулĕ эсĕ, Кирилл... Пĕртăванусене инкекрен хăтартăн", – теççĕ.

Инкек сăлтавĕ – электропралук юсавсăрлăхĕ. Шел паллах, Яковлевсем хуралтăсемсĕр юлнă. Анчах та ачи-пăчи чĕрĕ те сывви – телей! Тăваттăри Кирилл тавçăрулăхне пула тата вăл çухалса кайманран пĕртăвансем инкекрен çăлăннă.

Хисеплĕ ашшĕ-амăшĕ! Ачăрсене вут-кăварпа электричество хăрушсăрлăхĕ пирки эсир «Тетте» журналта /2015 çул, /6/ «Электричество безопасности» конкурс йĕркипе паллаштарса унта хутшăнтарма пултаратăр.

Çапах та, пурнăçран хакли çук. Сыхланакана яланах Турă сыхлать теççĕ, çавăнпа та сыхă та асăрханулла пуласчĕ.

*Луиза ВАСИЛЬЕВА.*

**Хисеплĕ вулакансем!**
**«Хыпар» Издательство çурчĕн кăларăмĕсене 2016 çулăн I çуррине илсе тăмашкăн**

июль уйăхĕнчен тытăнса
август уйăхĕн 31-мĕшĕччен –

**ЙŸНĔ ХАКПА!**

**«ХЫПАР» – 625,62 тенкĕ**
(кăçалхи II çур çултинчен 172,44 тенкĕ йўнĕрех)
**«Хыпар»-эрнекун – 325,92 тенкĕ**
(19,62 тенкĕ йўнĕрех)
**«ТАНТĂШ» хаçата – 266,70**
**«САМАНТ» журнала – 187,26**
**«ТЕТТЕ» журнала – 148,98 тенкĕпе çырăнтараççĕ.**

# Тĕрлĕрен: вула та пĕл

ЧР ПУÇЛĂХĔН СТИПЕНДИАЧĔ

## «Конкурссене хутшăнсан хăвна тытма вĕренетĕн»




Ачаранах алĕçĕпе аппаланма пĕлнине мĕн çиттĕр ĕнтĕ? Хĕрачасем тĕрĕ тĕрлеççĕ, нуски-алсиш çыхаççĕ, арçын ачасем вара сĕтел-пукан ăсталаççĕ, кил-çурта йывăçран каскаласа тунă эрешсемпе илемлетеççĕ… Паллах, тĕпренчĕкĕсем ашшĕ-амăшĕнчен чылай тĕслĕх илеççĕ. Çапах шкулти ятарлă кружоксен те витĕмĕ пурах.

Муркаш районĕнчи Юнкă шкулĕнче вĕренекен Лев Романов вара сĕтел-пукан çеç мар, самолет моделне те кăсăклансах ăсталать. Авиамоделировани кружокне вăл тăваттăмĕш класранпах, юлташĕ Дима сĕннипе, çӳрет. Çак кружокра вăхăта пĕрре те сая яманнине палăртать арçын ача. Унта вăл тĕрлĕрен ĕçе хăнăхать-çке. Юрий Николаевич Самушков вĕрентекенрен Лева ырă тĕслĕх илме тăрăшать. Ăсталăхне кăтартас тесе килĕнче тăтăшах мăлатук тытса ĕçе пуçăнать.

Висĕм çул авиамоделировани кружокне çӳрекенсенчен чи хастаррисене, Левăпа тусне, Чĕмпĕрте иртнĕ Пĕтĕм Раççейри авиамодельсен конкурсне хутшăнма суйланă. Çĕмĕрлери тепĕр висĕ маттурпа пĕрле Юнкăсем кӳршĕ регионра тăван республика чысне хӳтĕленĕ. Хастар ачасем яланах ырăпа палăрма май тупаççĕ çав.

Çавăн пекех Лева «Çамрăк биолог» кружока та çӳрет. Çакă ăна çутçанталăка лайăх ăнланма, кашни ӳсентăран тата чĕрчун ятне пĕлме пулăшать иккен. Экологи слечĕсене хутшăнсан вара вăл хăйне çав тери телейлĕ туять. Татьяна Владимировна Ермакова вĕрентекен ертсе пынипе кружока хутшăнакансем тăван тавралăхшăн сахал мар ырă ĕç тăваççĕ.

Общество ĕçĕсене хастар хутшăннăшăн, тĕрлĕрен ăмăртусенче çĕнтернĕшĕн Лев Романов кăçал ЧР Пуçлăхĕн стипендине тивĕçнĕ. Çакă малашне тата пысăкрах çитĕнӳсем тума хавхалантарнине палăртрĕ маттур арçын ача.

– Конкурссене хутшăнсан хăвна тытма вĕренетĕн, ытти çынсене хăнăхатăн. Стипендиат пулас тесен лайăх вĕренĕр, ăмăртусене хутшăнăр, – терĕ Лева «Тантăш» вулаканĕсене ăнăçу суннă май.

***Лариса ПЕТРОВА.***

Муркаш районĕ,
Юнкă шкулĕ.

ÇАМРĂК КОРРЕСПОНДЕНТ

## Савнă шкулăм Тавăтра



**Тавăт вăтам шкулĕ – районти пысăк шкулсенчен пĕри. Паян кунта 168 вĕренекен пĕлӳ пухма çӳрет. 2008 çулта ăна Чăваш АССРĕн тава тивĕçлĕ, РСФСР халăх артисчĕн Б.С.Марков ятне панă. Шупашкарти Оперăпа балет театрне уçаканĕ, паллă артист тата драматург шăпах çак шкултан вĕренсе тухса Чăваш çĕрĕн паллă çынни пулса тăнă.**

Шкулта тĕрлĕрен ĕç-пуç иртересси йăлана кĕнĕ. Паллă уявсене халалланă мероприятисем те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Шкул пурнăçĕ интереслĕ пуласси, яланлăха асăмăрта юласси пирĕнтен, вĕренекенсенчен, нумай килет. Эпĕ шкулти ачасен президенчĕ пулнă май çакна уйрăмах тимлетĕп. Тĕрлĕрен конкурссене хутшăнатпăр, мероприятисем ирттеретпĕр. Проектсем хатĕрлесе вĕсене пурнăçа кĕртессипе те тăрăшса ĕçлетпĕр. Юлашки вăхăтра çĕршывра сывă пурнăç йĕркине пăхăнасси çинчен тăтăш калаçаççĕ. Чирсем «çамрăкланса» пыни питĕ пăшăрхантарать. Ачасем урамра мечĕкле выляс вырăнне компьютер умĕнче кун кунлама кăмăллаççĕ. Нумайăшĕ футболла та, волейболла та выляма пĕлмест. Çакна тĕпе хурса эпир шкулта «Сывă пулма кăмăллă» ятлă проекта аталантарас терĕмĕр. Унпа килĕшӳллĕн тĕрлĕрен мероприяти ирттерме палăртрăмăр. Вĕсем пурте çамрăксене, шкул ачисене сывă пурнăç йĕркине пăхăнма, сывлăха сыхлама, спорта юратма хавхалантарса тăрĕç.

Эпĕ ачаранах спортпа туслă. Сывă пурнăç йĕркине пăхăнни дисциплинăна çирĕплетме пулăшать. Кунсеренех пулакан тренировкăсем, час-часах иртекен ăмăртусем мана çирĕп çан-çурăмлă пулма пулăшаççĕ. Çавăнпа эпĕ пурне те спортпа туслашма чĕнсе калатăп.

Пирĕн шкулта волейбол, футбол, хоккей тата çăмăл атлетика лайăх йĕркеленнĕ. Шкул команди районта тăтăшах малти вырăна тухать. Чылайăшĕ Элĕкри «Хĕлхем» спортпа физкультура комплексĕнче район команди йышне кĕнĕ. Эпĕ те волейболпа интересленетĕп. ФСК спорткомплексĕ Элĕк салинче нумай пулмасть уçăлчĕ. Кĕске вăхăтрах вăл сывă пурнăç йĕркине пăхăнакансемшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăчĕ. Кунта пултаруллă, хăйсен ĕçне чунтан парăннă тренерсем ĕçлеççĕ. Çак спорткомплекса çӳреме пуçланăранпа манăн пурнăç та ырă енне улшăнчĕ.

Спортăн ытти енĕсем те чуна çывăх. Çавăнпах ГТО нормисен ылтăн значокне илме тивĕç пултăм. Кашни çулах эпир районта иртекен «Орленок» спорт вăййисене хутшăнатпăр. Иккĕмĕш çул ĕнтĕ эпĕ – хамăр ушкăнăн командирĕ. Пĕлтĕр районта иккĕмĕш вырăн çĕнсе илтĕмĕр. Пирĕн ачасем чăннипех те маттур: çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ тăваççĕ. Районта çеç мар, республика шайĕнче иртекен ăмăртусенчен те Хисеп хучĕсемпе, медальсемпе таврăнаççĕ. Уйрăмах Андрей Степанова, Настя Никитинăна, Владимир Филиппова, Аня Герасимовăна палăртас килет. Вĕсен тăрăшулăхĕ пуриншĕн те тĕслĕх вырăнĕнче.

Çитĕнӳсем тума хавхалантаракансене те палăртса хăварам-ха. Физкультурăпа ОБЖ вĕрентекенĕ Николай Петрович Васильев Тавăт шкулĕнче 40 çула яхăн ĕçлет. Вăл яланах ачасем хушшинче. Ир е каç, ĕç е кану кунĕ – кирек хăш вăхăтра та ăна шкулти спорт залĕнче курма пулать. Кашни ачапа пĕрле çитĕнĕвĕшĕн савăнать. Çавăнпах, тен, пирĕн шкул ачисем район шайĕнчи физкультура тата ОБЖ олимпиадисенче пиллĕкĕн-çиччĕн малти вырăнсене йышăнаççĕ, республика олимпиадисене те хутшăнаççĕ.

Шкулта çăмăл утассине кăмăллакансем те чылай. Вĕсемпе СССР тава тивĕçлĕ тренерĕ В.С.Семенов уйрăммăн ĕçлет. «Хĕлхем» ФСКра вăл хăварт утакансен кружокне йĕркеленĕ. Унта çӳрекенсем Раççей шайĕнчи ăмăртусенче те пысăк çитĕнӳсем тăваççĕ. «Шурă чулсем» канупа спорт лагерьне кайса çӳрессия йăлана кĕчĕ. Кунта та Виктор Семеновичăн тӳпи пысăк.

Патшалăх та пире тимлĕхсĕр хăвармасть. Пĕлтĕр Тавăт шкулĕ «Ялти спорт залĕсем» программăна лекрĕ. Унпа килĕшӳллĕн спорт залне тĕпрен юсаса çĕнетрĕç.

Патшалăх тимлĕхĕ те, вĕрентекенсен пулăшăвĕ те пире хавхалантарса пырать. Шанатăп, Тавăт шкулĕнче чапа кăларакансем пирĕн йышра хушăнсах тăрĕç.

***Виктория ГЕРАСИМОВА.***

Элĕк районĕ,
Тавăт шкулĕ.

Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - (çур çула) - Чăваш Республикинче,
11466 - республика тулашĕнче.

● Редакципе издатель адресĕ:
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă. "Чувашия" ИПК" ПУП типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР
В.В.ТУРКАЙ

● ТЕЛЕФОНСЕМ
директор-тĕп редактор: 56-00-67
редактор, çырусемпе
тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: 28-83-86
шкул ачисен пайĕ: 28-85-69
спорт тата экологи пайĕ: 56-11-80
право, кăмăл-сипет пайĕ: 28-83-89
факс: (8352) 56-15-30
бухгалтери: 28-83-64

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
Л.ВАСИЛЬЕВА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
1106 экз.

● ЗАКАЗ
№ 2705
Пичете июль уйăхĕн 15-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

# Çулла та чун шкулах туртать




Шкул ачисен çуллахи каникулĕн хĕрӳ тапхăрĕ пырать-ха. Мĕн тери савăнăçлă вăхăт. Урок тумалла мар, шăнкăрав сассипе шарт сикмелле мар… Хăйсем вара пурпĕрех шкула чупаççĕ. Унта çуллахи лагерь уçăлнă вĕт!

Етĕрне районĕнчи Кивĕ Тинкеш шкулĕ çулла та ача сассинчен татăлмасть. Çичĕ-вунпĕр çулсенчи çирĕм ача кунта июнĕн пĕрремĕшĕнчен пуçласа çирĕм улттăмĕшĕччен шкул çумĕнчи «Цветик-семицветик» лагерьте сывлăхне çирĕплетрĕ. Унта икĕ отряд ĕçлерĕ: «Хĕвел» тата «Асамат кĕперĕ». Кану программи питĕ пуян.

– Çак лагере çӳрекенсен йышне палăртнă чухне нумай ачаллă е сахал тупăшлă çемьерен, çурма е хăр тăлăх ача пулнине шута илтĕмĕр, – палăртрĕ лагерь ертӳçи Эльвира Пантелеймоновна Васильева. – Татьяна Георгиевна Егорова тата Зоя Николаевна Сергеева вожатăйсем канăва хаваслă йĕркелеме пулăшаççĕ. Ку çулталăка Константин Васильевич Иванов çуралнăранпа 125 тата Аслă Çĕнтерӳ пулнăранпа 70 çул çитнине халалланă. Çавăнпа лагерь программине те çак темăсемпе çыхăнтартăмăр. Кашни кунăн – хăйĕн тĕллевĕ. Паян, тĕслĕхрен, поэзи кунĕ. К.В.Иванова халалласа Литература касçĕ ирттертĕмĕр.

Программăра ӳкерӳ кунĕ те пур. Ачасем алла кăранташ, тĕрлĕ тĕслĕ сăрă тытса шухăш вĕçевне ирĕке яма, хут çине хăйне евĕр илемлĕх сăнлама юратнине кашниех пĕлет пуль. Сăвă флешмобĕ мĕн тери кăсăклă иртнĕ тата! Кашни ача унта вырăссен паллă поэчĕн А.С.Пушкинăн пĕрер сăввине вуланă.

Аслă çĕнтерӳ пулнăранпа 70 çул çитнине халалласа тĕрлĕрен вăйă йĕркеленĕ, «Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин геройĕсем» ятпа презентаци тунă. Культура çурчĕ çумĕнче вăрçăра пуç хунă салтаксене халалласа лартнă палăк пур. Ачасем ăна тирпейлесех тăраççĕ.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин ветеранĕсем çулсеренех сахалланса пыраççĕ. Мĕн тăвăн, çынна икĕ ĕмĕр пурăнма пӳрмен, вăрçă суранĕсем канăç паман чухне пушшех те. Ку тăрăхра халĕ виçĕ ветеран çеç юлнă. Çавсенчен пĕрне, Çĕнĕ Тинкешри Михаил Руфович Руфова, лагерь йĕркелӳçисем ачасемпе тĕлпулăва чĕннĕ. Ан тив, каласа патăр тăхăрвунă çулти ватă ӳсекен ăрăва иртнĕ пурнăç йывăрлăхĕсем çинчен. Кашни ача мĕн пĕчĕкрен тăнăçлăха, хĕвеллĕ те лăпкă тӳпене хаклама пĕлтĕр, çĕр çинче хăрушă та тискер вăрçă тухасран сыхлантăр. Этемлĕхе юратакан, тепĕр çынна ăнланма пĕлекен нихăçан та ăссăрла утăм тумĕ.

Ачасем ветерансене пулăшма та çӳреççĕ, ырă ĕç тусан хăйсем те питĕ савăнаççĕ.

Литература çулталăкне халалласа вара «Г.Х.Андерсонăн юратнă юмахĕсем» викторина йĕркеленĕ, «Литература сăнарĕсен палăкĕсем» ятлă презентаципе паллашнă. Тепĕр кăсăклă мероприяти – «Литература сăнарĕсен парачĕ». Ачасем çакна мĕншĕн юратаççĕ-ха? Ун чухне вĕсем юратнă сăнарĕсем пек тумланса килеççĕ-çке, мĕн тери интереслĕ!

Çирĕм пĕрремĕш ĕмĕрти Нарспи мĕнлерех-ши вăл? Лагере çӳрекенсем ăна епле кураççĕ? Ӳкерчĕксен конкурсĕнче кĕçех çакна та пĕлме пулчĕ. Çавăн пекех «Ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсем», «Пулмасла халап çыратпăр» вăйăсене ачасем питĕ юратаççĕ.

Шкул картишĕнче питĕ илемлĕ. Кунта мĕн тĕрлĕ клумба ăсталаман пуль! Чечексем çеçке çурсан тата илĕртӳллĕрех курăнĕç вĕсем. Проекчĕсене биологи вĕрентекенĕ Надежда Георгиевна Иванова хатĕрлет. Кашнинчех мĕн те пулин çĕнни шухăшласа кăларма тăрăшать вăл. Сăмах май, чечек калчисене шкултах çитĕнтереççĕ. Ачасем килтен илсе килни те пулнă.

Шкул пахчинче çулсеренех пахча çимĕç лартса ӳстереççĕ. Темĕн те пур анасем çинче: помидор та, кишĕр те, сухан та, купăста та, хăяр та… Ĕç бригадине çӳрекен ачасем кунта тăрмашнăшăн укçа та ĕçлесе илеççĕ-çке.

Апат енчен шăпăрлансем пĕрре те хавшамаççĕ. Кунне иккĕ çитереççĕ вĕсене: ирхине – пăтă, кăнтăрла – пĕрремĕшпе иккĕмĕш, салат. Апачĕсем кашни кунах тĕрлĕрен, витаминран пуян.

– Ачасене хӳтĕлемелли кун шкулта конкурс ирттертĕмĕр. Унăн тĕллевĕ: «Телейлĕ ачалăх» темăпа асфальт çинче ӳкерчĕксем тăвасси. Кашниех кăмăлтан хутшăнчĕ, – пĕлтерчĕ Эльвира Пантелеймоновна.

Пĕчĕкскерсен телейĕ, паллах, ĕçĕсенче те палăрать. «Ачасенчен лайăх çын ӳстерес килет-и? Вĕсене телейлĕ тăвăр», – тенĕ тĕнчипе паллă çыравçă Оскар Уайльд. Шкулта ĕçлекенсем те çак шухăша тĕпе хураççĕ, ахăртнех. Мĕншĕн тесен ачасемпе вĕрентекенсен хутшăнăвĕсем ăшă та кăмăллă. Эппин, шкула çӳрени те вĕсемшĕн пысăк телей.



## «Грация» – пултаруллисен пĕрлешĕвĕ

Акă пĕр пӳлĕмре хаваслă кĕвĕ илтĕнет – «Грация» пултарулăх пĕрлешĕвĕ çĕнĕ ташă хатĕрлет иккен. Ертӳçи, аслă вожатăй Светлана Николаевна Андреева, сĕнӳсемпе хавхалантарсах тăрать. «Грация» республикăри «Ташлакан шкул» проектпа килĕшӳллĕн Етĕрнери Ачасен пултарулăх çурчĕ çумĕнче йĕркеленнĕ. Маттур ачасем пĕрремĕш класранпах ташă кружокне çӳреççĕ. Тăватă çул пухнă ăсталăхне малалла та аталантарасшăн-ха. Çак вăхăтра ушкăн чылай конкурсра палăрнă, Хисеп хучĕсемпе таврăнса савăнтарнă.

Нумаях пулмасть Етĕрнери «Хрустальный башмачок» конкурсра виççĕмĕш вырăн çĕнсе илнĕ вĕсем. Пĕлтĕр пултарулăх пĕрлешĕвĕ республика конкурсне хутшăнма Шупашкара та çитнĕ. Даша Афанасьева унта «Ташша юратнăшăн» ятпа Хисеп хутне тивĕçнĕ. Кăçал вăл районти «Çулталăк кружокçи» конкурсра çĕнтернĕ.

Акă Надя Романова, Саша Золотова тата Катя Дмитриева çĕнĕ ташăпа паллаштарас терĕç. Хусканăвĕсем питĕ илемлĕ, сăн-питĕнче – йăл кулă. Кĕçĕнреххисем те вĕсене сăнанă май евĕрлеме хăтланаççĕ. Турă пани пурах çав ку хĕрачасен.



Маттурскерсем ташăра çеç мар, ытти енчен те хастар. Надя спортпа туслă, чупассипе класри тантăшĕсенчен малта пырать. Эстафетăсене хастар хутшăнать. Шывра ишме те юратать. Сашăпа иккĕшĕ час-часах ролик конькипе ярăнма тухаççĕ.

– Эпĕ вара спорт ăмăртăвĕсене анчахрах хутшăнма пуçларăм. Малашне хастартарах пулас килет, – тет Саша. – Шыва кĕме юрататăп. Лайăх ишме пĕлместĕп-ха, пурпĕр хăрамастăп, вĕренетĕпех. Ăмăртусене хутшăнма мана Даша Михайлова тусăм хавхалантарать. «Ма хутшăнмастăн? Атя, тапран», – тесех калать вăл мана.

Катьăна вара тусĕсем ĕçчен пулнăшăн мухтаççĕ, унăн вăй-халĕнчен тĕлĕнеççĕ. Çак хаваслă хĕрачана лагерьте те пысăк тивĕç шанса панă. Вăл – хăйĕн отрячĕн командирĕ.

Хĕрачасем питĕ туслă. Пĕр-пĕрин лайăх енĕсене калама ыйтсан ырă сăмах шеллемеççĕ. Виççĕшĕ те пĕр-пĕрне шухăшранах ăнланнине палăртрĕç. Мĕн тери хăватлă иккен туслăх!

Акă вĕсем тăваттăмĕш класпа сывпуллашрĕç те ĕнтĕ. Çак çулсенче мĕн чухлĕ çĕнĕлĕхе ăса хывнă, вăхăта мĕн тери хаваслă ирттернĕ. «Сывă пул, кĕçĕн шкул» ятпа йĕркеленĕ мероприятире вара хĕрачасем куççульне чарайман, шкул пурнăçĕнчи пĕчĕк тапхăр вĕçленнĕрен чунĕсем еплерех тăвăлса килнĕ-çке. Юратнă вĕрентекенрен те уйрăлас килмест. Анчах вăхăт вырăнта тăмасть çав. Пурпĕрех кулянма кирлĕ мар. Тен, ыранхи кун паянхинчен те хĕвеллĕрех пулĕ, ытларах савăнăç илсе килĕ? Ун чухне, пĕрре те иккĕленместĕп, «Грация» пултарулăх пĕрлешĕвĕн çитĕнĕвĕсем тата пысăкланĕç.

## Конкурса хутшăнни кăмăла çĕклет

– Кăçал Çĕнтерӳ пулнăранпа 70 çул çитнине халалланă район конкурсне хутшăнса лауреат пулса тăтăмăр, – каласа парать Светлана Николаевна. – «Эткер» центрпа та тачă çыхăну тытатпăр. Пĕлтĕр хамăр тăрăхран тухнă Совет Союзĕн геройĕ, Федот Никитич Орлов, çинчен видеоролик хатĕрлесе виççĕмĕш вырăна тухрăмăр. Станислав Лаванов Федот Орлов ячĕпе урам валли вывеска хатĕрленĕччĕ. Кăçал вара Виталий Петров «Ветеран аса илĕвĕ» видеороликпа иккĕмĕш вырăн çĕнсе илчĕ. Çавăншăн вăл Анапăри «Смена» лагерьте канма тивĕçрĕ.

Виçĕ шкул хушшинче /Кивĕ Тинкеш, Советски тата Мăн Чураш/ иртнĕ спартакиадăра пионерболла вылямалла, канат туртмалла тата шывра ишессипе ăмăртнă. Çĕнтерӳçĕ-шкул кайран Етĕрнери ăмăртăва хутшăнма тивĕçĕ. Çавăнпа Кивĕ Тинкешсем тăрăшсах хатĕрленеççĕ.

Каникул вара малалла пырать. Пурин те вăхăта хаваслă ирттермелле пултăр, хăрушсăрлăх йĕркине те манас марччĕ!

**АВТОР сăнӳкерчĕкĕсем.**

*Лариса ПЕТРОВА (тел. 56-11-80) хатĕрленĕ.*

КАНУ

# Сывă пул, юратнă лагерь!



**Июнь уйăхĕнче пирĕн шкулта «Семицветик» хаваслă лагерь уçăлчĕ. Ачасемшĕн вăл чылайччен асра юласса шансах тăратпăр.**

Мĕн тĕрлĕ конкурса хутшăнса хăйсен пултарулăхĕпе куракана паллаштармарĕç-ши вĕсем? «Çут тĕнчере илем пурăнать» конкурс та авă хăйне евĕр илемлĕ иртрĕ. Вĕренекенсем чуна тыткăнлакан тум ăсталас тесе чĕререн тăрăшрĕç. Паянхи модăпа килĕшуллĕ прическăсем те турĕç. Юрă-кĕвĕ çеммипе ташă çаврăмĕсемпе те тĕлĕнтерчĕç.

«Ача-пăча Акатуйне» те хаваспах хутшăнчĕç 6-мĕш шкулăн хастар хĕрачисемпе арçын ачисем. Чăваш юрри-ташшипе савăнчĕç, хастарлăхĕсемпе куракана хăпартлантарчĕç.

Чăваш патшалăх пукане театрĕнче пăхнă «Письмо из войны»» спектакль хыççăн чылайччен шухăша кайса çӳрерĕç çамрăксем.

– Мĕн тери йывăр пурнăç пулнă фронтра. Пирĕн мăн мăн асаттесемпе кукаçисем, асаннесемпе кукамăйсен шăпи синкерлĕ пулса тухни, çамрăклăхĕпе телейне вăрçă татни чуна ыраттарасçĕ. Вăрçăран çыру килни – савăнăç пулнă, çав вăхăтрах куççуль кăларттарнă. Унти йĕркесене никам та куççульсĕр тата пăлханмасăр вулайман. «Киле çитсе тăраниччен сĕт ĕçесчĕ, çĕрулми çиесчĕ, мунча кĕрсе рехетленесчĕ, ачасене хам çума чăмăртасчĕ», – текен йĕркесем ирĕксĕрех макăртнă. Тата та чуна ыраттараканни, çавнашкал çунатлă та ĕмĕтлĕ йĕркесене шăрçаланă салтаксем хĕрӳ вăрçăрах выртса юлни. Вĕсен шăпине паянхи кун та пĕлейменни, – терĕç ачасем хурланса.

Хастарсем тата паллă çынсемпе кампа кăна тĕлпулмарĕç-ши? Акă çĕршыври пултаруллă хоккеистпа, хапхаçăпа, тренерпа Владислав Александрович Третьякпа куçа-куçăн калаçни ĕмĕр асра юлĕ. Вăл çамрăксене яланах спортпа туслашмаллине, сывлăх чи хаклă пурлăх пулнине асаилтерчĕ. Çавăн пекех писательсемпе поэтсемпе тĕлпулни те хăйнеевĕр уяв пулчĕ.




### Ашшĕ-амăшĕн пухăвĕ

Лагерьте пĕрремĕш хут ашшĕ-амăшĕн пухăвĕ иртрĕ. Пуçланчĕ каллех хавaслă самант. Вĕренекенсем сцена çинче хăйсене чăн-чăн артистсем пек тытма тăрăшрĕç. Тăрăшсах юрларĕç, ташларĕç, сăвă каларĕç. Юмах та лартса пачĕç. Ашшĕ-амăшĕ хăйсен тĕпренчĕкĕсем çине юратса пăхрĕ, пичĕсенче йăл-кулă çуталчĕ. Чăн та, ачасем хăйсене шанса панă рольсене ĕненмелле те сăнарлă калăпларĕç.

– Пирĕн ачасем вăхăта усăллă та хаваслă ирттернине хамăр куçпа хамăр курса ĕнентĕмĕр. Çак вăхăтра вĕсен тĕнчине кĕрсе ӳксе хамăрăн та лагерьте пулса канас килчĕ, – палăртрĕ ашшĕ-амăшĕ кăмăлтан та чун-чĕререн хăйсен шухăш-кăмăлне.

### Спорт

Кашни кун ирхине усă сывлăшра зарядка турăмăр. Çавăн пекех тĕрлĕ вăййă иртрĕ кунта.

Шашка ăмăртăвĕ те кăсăклă иртрĕ. Пĕрремĕш вырăна виççĕмĕш отрядри Кирилл Архипов çĕнсе илчĕ. Чи маттурри пулса тăчĕ вăл. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене Даниил Бурдасовпа Максим Алексеев пайларĕç. Арçын ачасем хăйсен çитĕнĕвĕсемпе çав тери хăпартланчĕç. Çак хастарсемех Ленин районĕнчи лагерьсен хушшинчи шашка ăмăртăвĕнче иккĕмĕш вырăна тухса шкул чысне хӳтĕлерĕç. Маттурсем!

Пионербол, волейбол вăййисенче те пирĕн ачасем йăрăлăхĕпе палăрчĕç. Июнĕн 9-мĕшĕнче вара хулари лагерьсенче канакансен спартакиадине те хаваспах хутшăнчĕç. Унта вара пирĕн ушкăн футбол, пионербол вăййисенче 3-мĕш вырăн, эстафетăпа канат туртассинче 2-мĕш вырăнсене çĕнсе илчĕç. Велоспорт ăмăртăвĕнче те «Семицветиксем» 3-мĕшсем пулса тăчĕç.

### Смена вĕçленчĕ

Ытла та хăвăрт иртрĕç-çке лагерьти кунсем! Акă смена вĕçленчĕ те.

– Сирĕнпе вăхăта çав тери усăллă ирттертĕмĕр. Никамăн та тунсăхлама вăхăт пулмарĕ. Пурте кăмăллă юлтăмăр. Сире вара, ачасем, малашне те ăнăçу сунатпăр, – терĕ шкул çумĕнчи лагерь пуçлăхĕ Татьяна Александровна Тимофеева.

Вĕренекенсем ăна тав турĕç, кашнин пит-куçĕнче йăл кулă çуталчĕ. Ку вăл – хавaслăх тата телейлĕ ачалăх палли.

***Лагерь пуçлăхĕпе унăн çумĕ***
***Татьяна ТИМОФЕЕВĂПА***
***Валентина ФРАНЦЕВА.***

Шупашкар,
6-мĕш шкул.

ПИРĔН ПУЛТАРУЛĂХ



# Упа кĕрĕкĕ

**(Юмах)**

Вăрманта пĕр ырă сунарçă çӳрет, пăшалне çурăм хыçне çакнă. Акă вăл тĕм айĕнче мулкач чĕтресе ларнине курчĕ.

– Камран эсĕ, сăрăскер, пит хăратăн? – ыйтрĕ сунарçă.

– Хаяр кашкăр мана çисе яратăп терĕ! Эпĕ вара кашкăртан хăратăп, çавăнпа йывăç айĕнче чĕтресе ларатăп!

– Эсĕ, мулкач тусăм, ан хăра. Упа пек тăхăн та усал кашкăра хăрат. Вĕрентсе ил ăна!

– Манран мĕнле упа пултăр? Эпĕ пĕчĕк вĕт. Тата пĕрмаях пуринчен те хăратăп, кашни сасăран чĕтретĕп.

– Манăн вара упанни пек кĕрĕк пур. Тăхăн!

Сăрă мулкач кĕрĕк ăшне кĕрсе ларчĕ, анчах ниепле те утаймасть. Кĕрĕкĕ пысăк-çке, вырăнтан хускалма та çук.

– Эсĕ ларах, мулкач тус, кашкăра кĕт. Вăл çывхарсан вара хыттăн харлат, – терĕ те сунарçă йывăç хыçне пытанса сăнама пуçларĕ.

Пур енчен те вăрман чĕрчунĕсем пуçтарăнчĕç. Ку ĕç мĕнпе вĕçленнине пурин те курас килет-çке.

Акă выçă кашкăр чупать. Кĕрĕке курчĕ те мĕнле чĕрчунне ăнланаймасăр тĕлĕнсе пăхрĕ. «Кĕрĕк» вара, эх, харлатать, шăхăрать. Кашкăр хăранипе чупса тарма та вăй çитереймерĕ. Çак вăхăтра сунарçă пăшалĕнчен сывлăша печĕ. Кашкăр ӳлесе ячĕ те йăванкаласа çырмана кĕрсе ӳкрĕ. Хăй пĕтĕмпех пылчăкпа вараланса пĕтрĕ. Выçă юлнишĕн кӳреннĕскер куççульпех йĕрет. Çӳлтен вара ытти чĕрчунсем ун çине пăхса куласçĕ.

– Малашне мулкачсене хăратаймăн ĕнтĕ!

Çавăнтанпа кашкăр ырăланса кайнă: пĕр мулкача та тĕкĕнмест, вăрманти пур чĕрчунпа та туслă.

***Дарья КРУПНОВА.***

Чĕмпĕр облаçĕ,
Чăнлă районĕ,
Аслă Нагаткино шкулĕ.

САВӐНӐÇ



# Хаваслӑ кану

Çуллахи канмалли кунсене пур ача та хаваспа кӗтет. Вӗсемшӗн каникул – чи савӑнӑçлӑ вӑхӑт.

Вӗренӳре тата ытти ӑмӑртура мала тухнӑ пирки пире шкул ертӳçисем похода илсе кайма шут тытнӑ. Кутамккана кирлӗ çи-пуç, кашӑк-чашӑк, курка тата ытти хатӗр-хӗтӗр тултартӑмӑр. Арçын ачасене пӑсӑлман апат-çимӗç тултарса пачӗç, палаткӑсемпе те тивӗçтерчӗç.

Пиллӗкмӗш класран вӗренсе тухнӑскерсене икӗ учитель çула илсе тухрӗ. Çулӗ вӑрӑм та йывӑр пулас пирки вӗсем пире тӳрех асӑрхаттарчӗç. Ун пек калани кӑштах та хӑратмарӗ, эпир савӑнсах малалла утрӑмӑр. Автобуспа чылай вӑхӑт кайрӑмӑр. Вырӑна çитсен пӗр пӗчӗк столовӑйне кӗрсе апатлантӑмӑр. Николай Иванович час-часах сумкинчен карттӑ кӑларса пӑхкаларӗ. Пирӗн çав карттӑ тӑрӑх çӳремелле иккен. «Ачасем, халӗ пирӗн пысӑк вӑрман урлӑ утса тухмалла. Айккинелле ан пӑрӑнӑр, çухалса ан юлӑр!» – терӗ вӗрентекен. Утмалли çул çинче хӑйӑр выртать, урасем путса анаççӗ. Çамка тӑрӑх тар юхма тытӑнчӗ. Çӑмӑл кутамкка та йывӑр туйӑнма пуçларӗ. Кулас шухӑшсем пӗтсе ларчӗç.

Петр Васильевич пирӗнтен кулса ыйтрӗ: «Ну, ачасем, поход мӗнлерех пек?» Эпир аран тухакан сасӑпа: «Килӗшет!» – терӗмӗр. Сасартӑк машина сасси илтӗнсе кайрӗ. Çаврӑнса пӑхсан пысӑк симӗс машина çывхарнине асӑрхарӑмӑр. Вӑл пирӗн тӗле çитсен Николай Иванович алӑ сулса ӑна чарчӗ. Кӑштах калаçнӑ хыççӑн пире машина çине хӑпарса ларма хушрӗ. Кун пеккине эпир пӗрремӗш хут куртӑмӑр. Вӑл питӗ пысӑк тата ултӑ урапаллӑ. Вӑрçӑри машина пекрех те туйӑнчӗ. Унӑн пысӑк ураписем хӑйӑр ӑшне путрӗç, вӑл ку çулпа йывӑррӑн кайрӗ. Пурте савӑнӑçлӑ кулма, калаçма тытӑнтӑмӑр.

Ак тавралӑх çуталчӗ – эпир вӑрмантан тухрӑмӑр. Машина çинчен ансан водителе тав турӑмӑр. Вӑрман хӗрринче ларса кӑштах апатлантӑмӑр, вара уй тӑрӑх нумай утрӑмӑр. Темӗнле ял тӗлне çывхартӑмӑр. «Паян кунта çӗр каçатпӑр», – терӗ Николай Иванович. Çумӑр çума тытӑнчӗ. Пӗр хӗрарӑм пире кирлӗ вырӑна илсе çитерчӗ. Икӗ хутлӑ чул çурта кӗтӗмӗр. «Ку питӗ кивӗ, ӗлӗкхи çурт. Малтан кунта пуянсем пурӑннӑ, кайран интернат пулнӑ», – ӑнлантарчӗ хӗрарӑм. Ку вырӑс ялӗ пулни сисӗнчӗ.

Эпир, хӗрачасем, çӳлти хута йышӑнтӑмӑр. Арçын ачасем, вӗрентекенсемпе пӗрле, аялти хута вырнаçрӗç.

Петр Васильевич пире пӗр витре тин кӑна сунӑ ӑшӑ сӗт килсе пачӗ. Ывӑннӑскерсем канлӗ çывӑртӑмӑр, тутлӑ тӗлӗксем тӗллентӗмӗр. Ирхине ял курса çӳрерӗмӗр. Пӗр хӗрарӑм палӑк пирки ӑнлантарчӗ. Тахçанах, пӗр килте пушар тухсан, ывӑлӗ комсомол билетне хӑтарма тесе çунакан пӳрте чупса кӗнӗ. Билетне çӑлнӑ, анчах хӑйӗн пурнӑçне сыхласа хӑварайман. Ӑна герой ятне парса хисепленӗ.

Малалла çула тӑссан юханшыв тӗлне çывхартӑмӑр. «Халӗ пӑрахут çине ларатпӑр!» – терӗ вӗрентекен. Вырнаçса ларсан шыв çине пӑхма та хӑрарӑмӑр. «Сирӗнтен кам ишме пӗлет?» – ыйтрӗ Петр Васильевич. Эпир, хӗрачасем, чӗнмерӗмӗр. Арçын ачасем вара мухтанма пуçларӗç. «Пӑрахучӗ путма пултарать-ши? Çавӑнпа ыйтать-ши?» – шиклентӗм эпӗ. Кирлӗ вырӑна часах çитрӗмӗр.

Вӑрман хӗрринче чарӑнтӑмӑр, арçын ачасем палаткӑсем вырнаçтарма тытӑнчӗç. «Ку Сӑр юханшывӗ!» – терӗ вӗрентекен.

Апат валли хуран çакса ятӑмӑр. Вӑрманта хӑрӑк турат пуçтартӑмӑр. Яшка пӗçерме çӗрулми шуратрӑмӑр. Акӑ апачӗ те пиçрӗ, таврана тутлӑ шӑршӑ сарӑлчӗ. «Ах, яшки мӗнле тутлӑ!» – савӑнса апатлантӑмӑр эпир. Ытти чухне апата тиркеме пӑхакансем те хальхинче юратсах çирӗç.

Вӗрентекенсем пире пӗчӗн шыва кӗме юраманнине асӑрхаттарчӗç. Ишме пӗлменнисем шыв хӗрринче кӑна шӑмпӑлтатрӑмӑр. Учительсем инçе ишсе кайнине ӑмсанса пӑхрӑмӑр. Хӗвел хытӑ хӗртнӗрен хура ӳтлӗ çынсем пекех курӑнма пуçларӑмӑр.

Лена Титова курӑк ӑшӗнчен аманнӑ кайӑк тупса килчӗ. Эпир ӑна йӑва туса патӑмӑр. Шывпа апат лартса хутӑмӑр. Кайӑка пурте хӗрхентӗмӗр. Ирхине Таня кайӑк вилнине пӗлтерсе хурлӑхлӑн кӑшкӑрса ячӗ. Пӗчӗкскере шӑтӑк чавса, макӑра-макӑра пытартӑмӑр. Хытӑ чунлӑ арçын ачасем пирӗнтен ахӑлтатсах кулчӗç.

Кӑнтӑрла пирӗн пата шыва кӗме тесе виçӗ ют арçын ача килчӗ. Нумай вӑхӑт ишрӗç, вылярӗç. Сасартӑк иккӗшӗ пулӑшу ыйтса кӑшкӑрма тытӑнчӗç. Акӑ шывра ача çатӑлтатнине асӑрхарӑмӑр. Вӑл пӗрре анса каять, тепре сиксе тухать. Пирӗн вӗрентекенсем ӑна шывран вӑхӑтра туртса кӑларчӗç. Эпир питӗ хӑрарӑмӑр, шывра хӑрушлӑх пулнине лайӑх туйрӑмӑр.

Çав ачана тӑна кӗртес тесе вӗрентекенсем чылай вӑхӑт асапланчӗç. Арçын ача куçне уçсан питӗ савӑнтӑмӑр. Николай Иванович пире шывра авӑр нумаййине, çавӑнпа пӗччен ишсе çӳреме юраманнине тепӗр хут асӑрхаттарчӗ. Ачасемпе паллашрӑмӑр, пӗрле чей ӗçрӗмӗр.

Петр Васильевич пирӗн Сашӑпа ачасене килне ӑсатма кайрӗ. Путасран çӑлӑннӑ Федя вӗсене нумай тав сӑмахӗ каларӗ. Сашӑпа Петр Васильевич таврӑнсан Николай Иванович тутлӑ пӑтӑ пӗçерчӗ. Вӗрентекенсем пирӗн умра геройсем пулса тӑчӗç, эпир вӗсене ытларах хисеплеме тытӑнтӑмӑр.

Вунӑ кун кантӑмӑр шыв хӗрринче. Вӑрӑмтунасем те пире палӑртнӑ вӑхӑтран маларах хӑратса яраймарӗç. Шкула автобуспа хавассӑн таврӑнтӑмӑр. «Ачасем, эсир халӗ сывлӑхӑра лайӑх çирӗплетрӗр. Хӗлле сирӗн пӗрин те сунаслама юрамасть», – терӗ Петр Васильевич. «Юрать!» - пулчӗ пирӗн хурав. Çав походра пур ача та ишме вӗренчӗ.

Кам юратмӗ-ши çуллахи канӑва, çутӑ хӗвелпе ӑшӑ шыва?

***Галина ПЕТРОВА.***

Шупашкар.

# Чи вӑйлисене – Çӗнтерӳ Кубокӗ

Аслӑ Çӗнтерӗве, вӑрçӑ ветеранӗсене халалланӑ спорт ӑмӑртӑвӗнче Çӗнтерӳ Кубокне çӗнсе илессишӗн шкул ачисемпе спорт ветеранӗсем – пурӗ 100 ытла спортсмен – тупӑшрӗç. Республикӑри чылай шкултан, Мари Эл республикинчен те килнӗччӗ вӑй виçекенсем.

Ӑмӑртӑва хутшӑнакансенчен чи кӗçӗннисем – виççӗмӗш класра вӗренекен Александр Алексеев /Шупашкарти 10-мӗш шкул/, Мухамед Табаев /Канашри 60-мӗш шкул/, Кирилл Краснов /Елчӗк районӗ/, Аделина Павлова /Тӑвай районӗ/ хастарлӑхӗпе чӑннипех те палӑрчӗç. Саша 34 хут, Мухамед 7 хут, Кирилл 134 хут, Аделина вара 133 хут кире пуканӗ çӗклесе куракансене тӗлӗнтерчӗç.

Аслӑ категоринче чылай çул тренер пулса тӑрӑшакан Михаил Петров хатӗрлекен спортсменсем 16 килограмлӑ кире пуканӗ йӑтассинче тупӑшса мала тухрӗç. Вӗсен йышӗнче: Иван Майоров /109 очко/, Ксения Петрова /121 очко/ тата Снежана Кириллова. Вӗсем ушкӑнпа ӑмӑртса 1-мӗш вырӑна тухрӗç, Çӗнтерӳ Кубокӗпе грамотӑна тивӗçрӗç.

Ветерансенчен В. Понихидкин, В. Голланцев, Н. Шалтынов тата ыттисем те призер ятне çӗнсе илчӗç.

Николай Шалтынов чылай çул кире пуканӗ йӑтассипе палӑрать, вӑл – спорт маçтӑрӗ. Çак черетлӗ ӑмӑртӑва вӑл хӑйӗн ашшӗне, вӑрçӑ ветераннe, Николай Андреевич Шалтынова халалласа та хутшӑнчӗ. Николай Шалтынов ку хутӗнче те малтисен йышӗнче пулчӗ, Çӗнтерӳ Кубокне тивӗçрӗ.

Мари Эл республикин хӑни, Кире пукан спорчӗн федерацийӗн тава тивӗçлӗ ӗçченӗ Александр Замков чӑн-чӑн «шоу» кӑтартрӗ. Йывӑр кире пуканӗсене хаваслӑ кӗвӗ янӑранӑ вӑхӑтра ывӑта-ывӑта тытрӗ. РФ тава тивӗçлӗ артисчӗ Арсений Яйцев пухӑннисене мари тата чӑваш юррисемпе хавхалантарчӗ.

В. Портнов /Козмодемьянск/ спорт ветеранӗ 16 килограмлӑ икӗ кире пуканӗ йӑтса тӗрлӗ хӑнӑхтару кӑтартрӗ, шпагат çине те ларчӗ. Мероприяти вӗçӗнче кире пуканӗ йӑтассипе спорт маçтӑрӗ ята тивӗçнӗ, Афганистан вӑрçинче пулнӑ Василий Голланцев çар юррисене шӑрантарчӗ.

***Нина ГРЕЧКО.***

# ӐШӐ САЛАМСЕМ

*Саламсене пӗлтермелли номерсем:*
89876741833
89051975911

**89603061725.** Хӑмӑн юратнӑ мӑнукӑмсене **Анатолий ШАБАЛОВА тата Любовь КАРАСЕВӐНА** сывлӑх, телейпе савӑнӑç, спортра тата вӗренӳре пысӑк ӳсӗмсем тума сунатӑп.

***Салампа юратнӑ кукамӑшӗ Целицата.***

Çӗмӗрле районӗ,
Вӑрманкас.

✦ ✦ ✦

**89603061725.** Ырӑ кӑмӑллӑ, тараватͅ, çепӗç юратнӑ тӑвана, Вӑрманкас ялӗнче пурӑнакан **Людмила Николаевна РАФИМОВӐНА** çуралнӑ кунӗ ячӗпе саламлатпӑр.

Яланах хавас чунпа çӳре,
Хӗвел сана савса йӑл култӑр!
Телейлӗ пул эс ӗмӗрех,
Сан сывлӑху та çирӗп пултӑр!

***Салампа Ивановсем,***
***Шабаловсем, Карасевсем.***

Çӗмӗрле районӗ.

✦ ✦ ✦

«Тантӑш» хаçатӑн çывӑх тусне, Элӗк районӗнчи Мӑн Карачура ялӗнчи **Нина Михайловна МИХАЙЛОВӐНА**, çуралнӑ кунӗ ячӗпе чун-чӗререн саламлатпӑр! Нина Михайловна, телейлӗ, вӑрӑм кун-çулпа пурӑнма ырлӑхсывлӑх пултӑр. Сире пурнӑçра ыррине кӑна сунатпӑр, малашне те пирӗн çывӑх тус пуласса шанатпӑр. Ан чирлӗр, утма çулӑр яланах такӑр пултӑр.

***Салампа «Тантӑш» редакцин туслӑ йышӗ тата хаçат вулаканӗсем.***

### Ленинград блокадине аса илни

# «Çăкăр тĕпренчĕкне паян та пăрахмастăп...»



1941-1942 çулхи хĕллехи 30-40 градуслă сивĕ кунсем Ленинград халăхне хуйха ӳкерчĕ. Ара, пӳрт ăшăтма кăмрăк та, вутă та çук-çке. Килте, урамра мĕн пуррине йăлтах çисе ятăмăр: сăран пиçиххисене, çăкăра, çĕрулмине... Урамра йытă-кушак чупнине те асăрхами пултăмăр. Çутă çук. Шыв ăсма Нева юханшыва çитсе килетпĕр. Хăшĕ-пĕри йывăр çунана аран сĕтĕрсе пыраканскер, канма ларать те... çаплипех вилсе каять. Утнă çĕрте тӳнекен те пур. Хăрушă! Урамри вилесене пуçтарса масара илсе кайми те пулчĕç. Ĕлкĕреймеççĕ. Е тата вĕсене камăн турттармалла-ха? Хамăр пек выçăпа начарланнă çынсенех вĕт. Вĕсем те утнă çĕртех тайкаланаççĕ. Кунне ĕçлекене 250 грамм çăкăр лекет. Ачасене – 125 грамм. Пурăнма йывăр.

*/Антонина Павловна Алехина/.*

* * *

Столяр çилĕмне плиткăпах илетпĕр. Ăна ирĕлтернĕ çĕре пăрăç, лавр çулçи яратпăр та вĕрететпĕр. Студень пулса тăрать. Сĕтел хушшине ларса ăмăртмалла çиетпĕр.

*/Юльга Николаевна Бриллиантова/.*

* * *

Тăвара кĕл тултарнă миххе яратпăр. Вăл хуралса çитсен тутлă çăмарта шăрши тухать. Хатĕр çимĕçе çăкăр çине сапатпăр... Ах, çăкăрпа çăмарта çинĕнех туйăнать...

*/Маргарита Владимировна Айзин/.*

* * *

Пĕр кунхине Володя пичче кашни çын пуçне пĕрер кило çĕпре илсе килчĕ.

– Ан тĕлĕнтер-ха, ларта пĕр кашăк çăнăх çук, эсĕ çĕпре туяннă тата. Паянхи саманара унпа мĕн тăватăн-ха? Çăкăрне те тĕлĕкре анчах пĕçермелли юлать ĕнтĕ, – терĕ асанне ун çине тĕлĕнсе пăхнă май.

– Э-э-э! Йăнăшатăн. Çĕпрене мясорубка витĕр кăларса типĕтмелле. Кайран макарон евĕр пĕçермелле, – çине тăрса ăнлантарчĕ Володя пичче асаннене.

Чăн та, çапла турăмăр. Шăрши кăмпа яшкине аса илтерчĕ. Çĕпрене ăшă шывпа сыпса çирĕмĕр. Мĕн тери тутлă!

*/Владислав Григорьевич Григорьев/.*

* * *

Ирхине куçа уçса яратăп та, хырăм ыратма тытăнать. Темĕнле тискер чĕрчун çан-çурăма чĕрнисемпе чĕрмеленĕ пекех туйăнать. Çакăн пек ыратăва тӳсеймесĕр чылай çын ухмаха та тухрĕ. Ăçта мĕн пур, çавна çăвара персе чикетĕп. Хырăма мĕнле те пулин тултармалла-çке. Тепĕр чух лĕпĕ шыв ĕçетĕп, хырăм тулать. Кăшт самай пек.

*/Зинаида Петровна Гущина/.*

* * *

Анне мана тăхăнмалли япаласем тыттарчĕ.

– Çаксене камран та пулин çăкăрпа улăштарса килейĕн-ши? – терĕ куççульне шăла-шăла.

Палăртнă вырăна çитрĕм. Пĕр хĕрарăм ылтăн алкине çӳлелле çĕклесе хыттăн кăшкăрчĕ:

– Камăн пĕр çăкăр пур? Алкапа улăштаратăп! – терĕ.

Темле, ĕç ăнчĕ-ши вăл хĕрарăмăн? Пĕлместĕп.

*/Маргарита Владимировна Айзин/.*

* * *

Анне, ялти ĕçчен хĕрарăм, вăрçă тухасса тĕшмĕртнĕ. Çавăнпа темиçе сул маларах чылай михĕ сухарипе çĕрулми хатĕрленĕ. Çавна пула вилĕмрен çăлăнса юлтăмăр.

*/Юрий Ильич Иванов/.*

* * *

Анне ĕçлекен ача садне çӳретĕп. Пĕррехинче пĕр ача юлташне хăйĕн пысăк ĕмĕчĕ пирки пĕлтерчĕ. «Пысăк чашăк яшка çиесчĕ», – терĕ. Вĕсен калаçăвне анне илтрĕ, хайхи ачана çавăтса столовăйне илсе кайрĕ. Повар макăрсах ячĕ.

– Урăх, урăх никама та ан илсе килĕр... Çимелли нимĕн те çук. Кастрюльте авă шыв çеç, – терĕ куççульне шăла-шăла.

Выçăпа пирĕн ушкăнра нумай ача вилчĕ. Унччен 35-ĕнччĕ, кайран 11-ĕн çеç юлтăмăр.

*/Маргарита Борисовна Александрова/.*

* * *

Ача садĕнче ĕçлекенсем патне ятарлă хушу килнĕ. «Апат пирки сахал калаçмалла, сăмаха урăххи çине пăрса ямалла», – тенĕ унта. Воспитательсем çавăн пек тума тăрăшаççĕ, анчах çывăрса тăнă ачасем вĕсен юмах-халапне итлесшĕн те мар.

– Апат! Апат кирлĕ пире! Анне килте мĕн тери тутлă пĕçеретчĕ, – тесе нăйкăшма тытăнаççĕ.

Пĕр повар, вăрман çывăхĕнче пурăнаканскер, кашни кун хыр йĕпписем пуçтарса килсе чей вĕретсе ĕçтерме тытăнчĕ.

Пĕр кунхине мана госпитале пулăшма илсе кайрĕç. Аманнă салтаксем валли апат хатĕрлеме. Уншăн мана икĕ кашăк сахăр пачĕç.

*/Маргарита Владимировна Айзин/.*

* * *

Пĕртен-пĕр тĕлĕнмелле ача сачĕ пулчĕ пирĕн. Блокада вăхăтĕнче пĕр ача та вилмерĕ. Кунта кашни тĕпренчĕке кунне 125 грамм мар, 150-шар грамм çăкăр лекет. Ĕлĕкхи кăмака çумне черетпе ăшăнма пыратпăр. Кайран пире воспитательсем ăшă утиялпа чĕркесе вырттараççĕ.

Пирĕн ушкăн çӳлти хутра, пысăк хваттерте вырнаçнă. Ача илме пынă асаннесемпе кукамайсен, аннесен картлашкапа çӳлелле хăпарма вăйĕ те çук. Çавăнпа вĕсем аялтах кĕтсе лараççĕ. Хăшĕ-пĕри çавăнтах, ларнă çĕртех вилсе каять...

Выçăпа пурăнма мĕн тери хĕн. Тепĕр чухне столовăйне хытанка арçын пырать. Ачасем çинĕ хыççăн чашăкĕсене темччен çуллать.

*/Юктябрина Константиновна Батенина/.*

* * *

Пилĕк кун иртсен çеç çăкăр илсе килчĕç. Сухаллă та çав тери начарка арçын ют çын çăкăр татăкĕсене ярса илчĕ те пĕрне çăварне чикрĕ. Чăмламасăрах çăтрĕ пулас. Пĕр ушкăн ун çине сиксе ӳкрĕ, çапаççĕ, тапаççĕ. «Çăкăра каялла пар!» – тесе кăшкăраççĕ. Арçыннăн сăмсинчен, çăварĕнчен юн тухрĕ. Вăл пĕрех юнпа тата куççулĕпе пĕрле тепĕр татăка çисе ячĕ...

*/Валентина Васильевна Грязнова/.*

* * *

Кĕперпе пыратăп. Умра – сулланса утакан арçын ман умрах ӳксе вилчĕ. Ун урлă иртсе кайрăм. Подъезда çитрĕм. Картлашкапа хăпарма вăй çук. Малтан пĕр урине, унтан теприне картлашка çине хурса малалла талпăнтăм... Алăка шаккарăм. Аппа уçрĕ. «Ачам, çитрĕн-и?» – терĕ. «Аха», – хуравларăм вăйсăррăн.

*/Тамара Романовна Аксенова/.*

* * *

Çуркунне. Йывăççем симĕсленчĕç. Çулçăсене татса мясорубка витĕр кăларатпăр та икерчĕ пĕçерсе çиетпĕр. Хырăмсем шар пек хăпарма пуçларĕç.

*/Юрий Ильич Иванов/.*

* * *

Утса пынă çĕртех çынсем ӳксе вилеççĕ. Хăрушă! Каçхине час-час вăранатăп. Анне чĕрех-ши тесе алли-урине тытса пăхатăп. Аллăм ăшă ӳт çине лекет те савăнсах каятăп.

– Аппа анне вилмен-ха. Пурăнтăр-ха, пурăнтăр. Вăл вилсен пирĕн мĕнле пурăнмалла? – тетĕп пăшăлтатса.

Пĕррехинче кашни çемьене кĕрпе параççĕ тесе хыпар тухрĕ. Аннепе Лида ятлă хĕрарăм ăна илме тесе васкаса тухса кайрĕç. Картлашкапа аннă чухне хайхи хĕрарăм кăшкăрса макăрса янă. Подъездра ывăлĕн вилли выртнă иккен. Лида нумай пулмасть выçăпа вилнĕ икĕ хĕрачине пытарнă, кăшт маларах фронтра ĕмĕрлĕхех куçĕсене хупнă ывăлĕне ялан-лăхах сывпуллашнă. Вăл çăкăр заводĕнче ĕçленĕ пулин те, тĕпренчĕкĕсем валли пĕр чĕлĕ çăкăр та илсе килеймен...

*/Мрина Георгиевна Булина/.*

* * *

1942 çулхи январĕн 1-мĕшĕнче атте вилчĕ. Икĕ кун вилнĕ аттепе пĕр вырăн çинче çывăртăмăр. Хыççăнах хваттер хуçисем, арăмĕпе упăшки, умлă хыçлăн çут тĕнчерен уйрăлчĕç. Анне çĕç кайнă чухне кил хушшине тасатакана çапла каларĕ:

– Хваттерте икĕ пĕчĕк ача тата виçĕ виле. Вилнисене илсе тухасчĕ, – терĕ.

Тĕрĕссипе, эпир чунĕсем тухнă аттепе хваттер хуçисенчен мар, йĕкехӳресенчен хăратпăр. Вĕсем вилесен алли-урине, сăмсисене кăшлама тытăннă. Çав тери шиклентĕмĕр...

Сак çинче ларатăп. Аппа юнашар пырса вырнаçрĕ.

– Анне вилсе кайрĕ... – терĕ те хурлăхлăн макăрса ячĕ.

Вăй çук та, куççулĕм те тухаймарĕ...

*/Зинаида Федоровна Григорьева/.*

* * *

Выçăпа виççĕри Леня шăллăм вилчĕ. Анне ăна çуна çине хурса масара туртса кайрĕ. Юр чавса хĕех пытарса хăварнă. 1942 çулхи январь уйăхĕнче вăтăр иккĕри Шура мăнакка çут тĕнчерен уйрăлчĕ. Икĕ кунран унăн вуниккĕри хĕрĕ Нюра, тепĕр кунран тăххăрти ывăлĕ Ваня та куçĕсене ĕмĕрлĕхех хупрĕç. Вилесем – пӳлĕмрех. Вĕсене илсе тухма никамăн та вăй çук... Шыв ĕçес килет, анчах куркари шыв та пăрланнă. Çиес килет – пĕр чĕптĕм çăкăр та çук. Кайран вилесене кил хушши тасатакан илсе тухрĕ. Выçлăха анне те чătaймарĕ, 1942 çулхине вăл та пурнăçран уйрăлса кайрĕ. Кун хыççăн мана, ытла та начарскере, ача çуртне ячĕç. Çапла эпĕ пурнăçра тăр пĕччен тăрса юлтăм.

*/Валентина Васильевна Грязнова/.*

* * *

Анне карточка илнĕ те ăна самантлăха сĕтел çине хунă. Хăй çав вăхăтра çеккунтлăха аиккинелле пăрăннă. Шăп çак вăхăтра карточкисем çухалнă. Анне хăрушшăн кăшкăрса янă.

– Вилĕм çитрĕ иккен, вилĕм çитрĕ!

Аннене хĕрхенекенсем тупăннă. Столовăй алăкне питĕрсе хунă та никама та кăларман. Ухтару пуçланнă. Аннен чи çывăх юлташĕ илнĕ иккен карточкăсене.

*/Юрий Ильич Иванов/.*

* * *

Анне больницăра. Пиччепе хваттерте иккĕнех юлтăмăр. Пĕр кунхине выçăпа аптăранă атте аран-аран утса килчĕ. Пире çавăтса урама илсе тухрĕ.

– Аннӳ вилсе кайĕ, хам та пурăнас шанчăклă çын мар. Тен, урамра сире хĕрхенсе пĕр татăк çăкăр паракан тупăнать, – терĕ чĕтренсе тухакан сассипе.

*/Нина Андреевна Григорьевская/.*

* * *

Ал-урана тăм илчĕ. Ача пăхакан пуçри тутăра салтрĕ те хăраса кайрĕ. Ара, нумай пыйтă-çке пуçра. Выçлăх çеç мар, сивĕ те чуна илет. Çавăнпа тутăра хăçан салтнине те астумастăп. Пуçа та тахçантапах çуман. Шакла хырса ячĕç. Ачасем çине пăхма хăрушă. Çăварĕсене уçсанах ун пĕрĕхсе тухать, шăлĕсем тухса ӳкеççĕ. Эпĕ те вĕсем пекех начарка, утма та йывăр...

*/А. В. Алексеева/.*

* * *

Çуркунне. Ирĕлсе пыракан юр айĕнчен вилесем тухаççĕ. Хула илемсĕр. Пурне те тасатма илсе тухрĕç. Пăр катма лум тыттарчĕç те... йывăра пула тӳнсе каяттăм. Эккей, ăна йăтмалăх вăй та юлман иккен манăн. Çапах нăйкăшмарăм, ыттисемпе тан ĕçлеме тăрăшрăм. Хула илемленчĕ. Вăрçăччenхи газон лаптăкĕсене пахча вырăнне усă курас терĕмĕр. Йăран туса пахчаçимĕç лартрăмăр. Ку çеç-и? Ăçта çĕр пур – йăлтах усă куртăмăр. Кĕçех мунчасем уçăлчĕç. Пĕррехинче эпир те лекрĕмĕр унта! Эх, мĕн тери савăнăç пулчĕ пирĕншĕн çăвăнса тасалассии!

*/Маргарита Владимировна Айзин/.*

* * *

Аннепе çуркуннехи илемлĕ кунта урампа пыратпăр. Йĕри-тавра тасалăх хуçаланать. Хĕвел те хитрен пăхать. Эпир савăнăçлă, ара, выçлăх кунĕсене парăнтарса чĕрĕ юлтăмăр-çке. Хĕпĕртенипе аннен аллинчен вĕçерĕнтĕм те чупса каясшăнччĕ. Анчах... малалла ыткăнма пĕр вăй та çук иккен манăн.

– Анне, вăрçăччен мĕн тери хытă чупаттăм эпĕ, çил ачи пек. Халĕ мĕншĕн пултараймастăп-ха? – терĕм ассăн сывланă май.

*/Юрий Ильич Иванов/.*

* * *

«Пултараймастăп», «пурнăçлаймастăп» йышши сăмаха никам та каламан. Пурте пĕрле кар тăрса кирек епле ĕçе те пурнăçлама тăрăшнă. «Йăлтах Тăван çĕршывшăн!» – текен девизпа пурăннă. Темле йывăр пулсан та.

*/Антонина Петровна Калери/.*

* * *

Аманнисене апатлантарма госпитале çӳретпĕр. Кĕнекесемпе хаçатсем вуласа паратпăр. Юлашки кунсенче Саша летчик пăшăрханнине асăрхарăмăр. Иккен ун патне юратнă хĕрĕ çыру çырма пăрахнă. Эпир çухалса каймарăмăр, Саша патне хĕрĕ ятĕнчен çыру шăрçалама тытăнтăмăр. Мĕн тетĕр! Каччăн сăн-пичĕ тинех çуталчĕ. Çакă уншăн сиплĕ эмел пекех пулса тăчĕ.

*/Юрий Иванович Богданов/.*

* * *

Хамран хам тĕлĕнетĕп. Нивушлĕ çавăн пек йывăрлăхра чĕрĕ юлма пултартăм? Паянхи кунччен апата хисеплетĕп. Ăна тăкакана, çăкăра перекене курсан чунăм ыратупа тулать. Ачасем те, уйрăмах асли, турилккере пĕр кашăк апат хăвармасть. Çăкăрпа савăт тĕпне те сăтăрса çиет. Хăнана кайсан:

– Ман пирки выçлăх тесе ан шухăшлăр. Анне чашăкра апата хăварнине юратмасть, чăтма пултараймасть, – тет кирек ăçта та.

Çăкăр... Пурнăç тыткăчи. Эпĕ халĕ те çăкăр тĕпренчĕкĕсене сĕтел çинчен шăлса çиетĕп. Вĕсене тăкма питĕ хĕрхенетĕп.

*/Валентина Шарифовна Винер/.*

Вениамин ТИМАКОВ

# Сăмах илемне туйсан...

## (сăвă çырма вĕренекенсене пулăшма)

*(Малалли.*
*Пуçламăшĕ 25-28-мĕш номерсенче).*

Рифмăланакан сăвă йĕркин вĕçĕсене **клаузула** теççĕ. /Клаузула латинла – «вĕçĕ»/. Вĕсем, йĕркери юлашки пусăма шута илсен, тĕрлĕрен пулаççĕ. Акă, пусăм чи юлашки сыпăксем çине ӳкет, тейĕпĕр:

Пиллĕкĕнех эпир, ай, пĕр тăван,

Пиллĕкĕнех те пилеш пĕр тымартан.

*/П.Хусанкай, «Тилли юррисем»/.*

Ку – **ар клаузула** шутланать /рифмăсене те эпир ар, ама, дактиль, гипердактиль йышшисене уйăратпăр. Вĕсемпе рифмăсем çинчен калакан урăм сыпăкра паллашăр/.

**Ама клаузулăра** вара, йĕрке вĕçĕнчен шутласан, иккĕмĕш сыпăк пусăмлă.

Чухăнлăх, пуянлăх, уйрăмлăх йăранĕ

Ирĕкпе çĕнленĕ пурнăçран тарĕ.

Чĕрере ачашшăн çунĕ, çулăмланĕ

Тантăшлăх, тăванлăх, юрату кăварĕ.

*/Çеçпĕл Мишши «Пуласси»/.*

Пĕр строфарах ар тата ама клаузулăсем те час-часах пулаççĕ. Акă, тĕслĕрен, А.Воробьев сăввинчен илнĕ пĕр тĕслĕх:

Пур пирĕн тивĕç савăнмалăх,

Туслашрĕ пирĕнпе кун-çул.

Хăй çĕрĕнче пурнать ман халăх

Хуçа пулса çул хыççăн çул.

Пусăм йĕрке вĕçĕнчен виççĕмĕш сыпăка ӳксен, **дактиль клаузули** пулать:

Ĕлĕк чухне эп хам ĕлĕкчĕ,

Ман пуçăмра сăсар çĕлĕкчĕ.

Поэзире **гипердактиль** вĕçленĕвĕ те пур /пусăм йĕрке вĕçĕнчен тăваттăмĕш сыпăк çине ӳкни/. Анчах вăл произведенисенче питĕ сайра тĕл пулать. Тĕслĕхшĕн Дельвиган çак йĕркисене илсе кăтартăпăр:

Люблю я задумываться,
Внимая свирели,
Но слаще мне вслушиваться
В воздушные трели
Весеннего жаворонка.

Ку сăвăри пĕрремĕш, виççĕмĕш тата пиллĕкмĕш йĕркесен вĕçĕнчи юлашки пусăм хыççăн тата виçĕ сыпăк пусăмсăр юлать. Строфан пĕтĕмĕшле тытăмне илес пулсассăн, кунта гипердактиль клаузулипе ама клаузула черетленнине асăрхатпăр. Чăваш поэзийĕнче çакнашкал вĕçленекен сăвăсем çук та темелле.

Клаузулăсăр пусне сăвă йĕркинчи ритмпа тачă çыхăннă тепĕр ен вăл – **анакруза** /сăвă йĕрки пуçламăшĕнчи пĕрремĕш пусăм ӳкекен сыпăк е пусăм ӳкиччен сыпăксен ушкăнĕ/. Анакруза та тĕрлĕрен пулать: пусăм пĕрремĕш, иккĕмĕш, виççĕмĕш е каярахпа ытти сыпăксем çине те ӳкме пултарать. Тĕслĕхсем:

1. Ленин сырнă кашни сăмахра

Çĕнĕ вăй, çĕнĕ шухăш çиçет.

*/В.Давыдов-Анатри/.*

2. Ĕçри ĕçчен пек Атăл кăнтăрла:

Вылять ун çийĕн тĕтĕм те ăрша.

*/Митта Ваçлейĕ/.*

3. Атăла пĕвесен, йăлăма шыв илсен,

Сарлака кукăрсем хумсемпе чӳхенсен...

Урамран урама ишсе каç юрлама.

*/А.Алка/.*

Маларах асăннă симметрилĕх, пĕрремĕшпе иккĕмĕш ритм, сăвă йĕркисен тытăмне туса хураççĕ.

Çеçпĕл Мишшин «Тинĕс» сăввине пурте пĕлетпĕр ĕнтĕ. Ку произведение çыриччен маларах поэт хăйĕн шухăшне блокнот çине прозăлла çапла палăртса хунă: «Тинĕс ахăрса кайрĕ. Хӳме пек, хӳме пек хумĕсем шавласа, çыран хĕрне вăйлăн пырса çапăна-çапăна саланаççĕ. Тинĕс, эсĕ вăйлă. Ху хумусен вăйлă, хăюллă юрри сассипе ман чĕрене вăй кӳрт. Чĕре çунтăр. Чĕлхе вĕçне кăварлă сăмахсем килччĕр. Вара эпĕ, хам чăваш çĕрне кайсан, хам вăя, чĕре вăйне чăваш çĕрне парăп. Кăварлă сăмахăмпа çамрăк чунсене вăратăп. Пурте «тĕнче курччăр». Çут тĕнче илемне пĕлччĕр».

Поэт кайран çак шухăша сăвăлла епле чуна тыткăнлатмалла витĕмлĕ калама пултарнинчен тĕлĕнмеллипех тĕлĕнетĕн. «Тинĕс ахăрса кайрĕ. Хӳме пек, хӳме пек хумĕсем шавласа, çыран хĕрне вăйлăн пырса çапăна-çапăна саланаççĕ» тени, тĕслĕхрен, еплерех янăрать хальхинче авă:

Вĕçсĕр-хĕрсĕр тинĕсĕм,
Хуп-хуран, сип-симĕсĕн,
Кăпăк тумлăн, хумлăн-хумлăн
Çырана çапса, хăюллăн
Хумлă сулнăксемпе сулăн,
Хумлă кăпăкпа вĕре...
* * *
Тинĕс, тинĕс, вăйлăрах
Хыççăн-хыççăн хум пăрах.
Тамăк вутлăн, тамăк çутлăн,
Вут-кăваррăн, хăр-хаяррăн,
Тайăн-тайăн, çырăн-варăн,
Хутлă хумлăн сулăн-ыткăн.
* * *
Тинĕс, тинĕс, вăйлăраххăн,
Хăвăртраххăн, çăмăлраххăн,
Чул пулсан – хăватлăраххăн,
Хыççăн-хыççăн хум хумла!
Эс хăюллăн, вăйлă хумлăн,
Йывăр слăлă, йывăр чуллăн,
Чуллă çырана тулла.
Вăйлă сулăмлăн, хăюллăн,
Хыççăн-хыççăн хум пăрах...

**(Малалли пулать).**

## Савнăç – чĕрĕре

Эп пыратăп уйпала –
Тĕрĕслетĕп тыр-пула.
Пучахсем пиçсе çитеççĕ,
Кайăксем те хĕпĕртеççĕ.

Çырмасенче пĕвесем
Çуталаççĕ тĕкĕр пек.
Умлă-хыçлă пуллисем
Ăмăртса ишеççĕ тек.

Сарă-сарă тыр пусси
Тинĕс евĕр чӳхенет.
Аякра – куккук сасси.
Манăн чунăм киленет.

Янкăр кăвак тӳпере
Тăри сасси илтĕнет.
Тухса куртăм уй-хире,
Савнăçпа чĕре сикет.

Вăхăтра пухса кĕртер
Пиçсе çитнĕ тыр-пула.
Тулли сĕтел хатĕрлер
Ĕç вĕçленнĕ ятпала.

*Валентина ХРИСТОФОРОВА.*
Вăрмар районĕ,
Тупах ялĕ.

## Шупашкарăм

Иртенпе паян кĕрлет
Тăван хула урамĕ.
Туслă пурăнма хистет
Тĕп хулан çурхи уявĕ.

Кĕрлет, кĕрлет тĕп хула
Чăваша сума суса.
Çĕр пин сасă, çĕр пин юрă
Мухтать тăван халăха.

Хăна-вĕрле шавласа
Килсе çитнĕ аякран.
Тĕп хуламăра савса,
Çирĕп туслăх вăйларан.

Чипер, хитре пикесем,
Куç тулли чăваш тĕрри.
Акăш евĕр уттисем…
Чун савăнать çав тери.

Янра! Кĕрле, Чăваш Ен!
Ыр сăмах çеç сан çинчен.
Çепĕç туйăм парнелен,
Чăваша çӳле çĕклен.

## Ăçта хурав?

Хура пĕлĕт явăнать
Йĕри-тавра ял тавра.
Çил-тăвăл çавăрттарать:
Те пăра, те çумăра.

Ыр çанталăк ăçта-ши?
Пахчаçимĕç пулать-ши?
Çапăçаççĕ тăтăшах
Сивви, ăшши тăрăшсах.

Çутçанталăк тулашать
Халăхпа, тен, кӳлешсе.

Хăçан канăçлăх пулать?
Кам парать-ши тупсăмне?

Çук! Ан кĕт эс хуравне.
Пурнăç чупĕ малалла,
Тикĕслесе халь пурне
Хăй палăртнă çулпала.

*Светлана НИКОЛАЕВА.*
Вăрмар районĕ,
Вăрмар сали.

## Ячĕ çăлтăр пек çунать

Чăн поэзи тӳпинче
Çутă çăлтăр ялтăрать,
Кашни чăваш чĕринче
Поэт ячĕ пурăнать.

Ивановсен Кĕçтукне
Питĕ лайăх пĕлетпĕр,
Пултарулăх çул-йĕрне
Уроксенче тĕпчетпĕр.

Пăртта йăхĕнчен тухса
Ӳснĕ Пушкăрт çĕрĕнче,
Сăмах хăватне туйса
Илнĕ Чĕмпĕр шкулĕнче.

Сăвăсем шăрçалама
Чунĕ аслă пулнă çав,
Вырăсларан куçарма
Чĕлхи яка пулнă çав.

Çӳлтен çӳле çĕкленсе
Ячĕ çăлтăр пек çунать,
Çутă хĕвел пек çиçсе
Ялан чĕрере юлать.

Чăвашсен сăвăçине
Тĕнчипелех пĕлеççĕ,
Ун «Нарспи» поэмине
Паян кун та тĕпчеççĕ.

*Диана СОЛИНА.*
Елчĕк районĕ,
Çирĕклĕ Шăхаль шкулĕ.

## Шурă хурăн

Умри пĕчĕк пахчана
Шурă хурăн лартрăм.
Пĕчĕкрен пысăк пулма
Шыв ытларах сапрăм.

Çуркуннепе пĕчĕк хурăн
Сарчĕ симĕс папкине.
Çу кунĕнче эсĕ курăн
Вăл епле илемлине!

Çилпеле вăл вĕлкĕштерчĕ
Симĕс кăтра çулçине.
Çĕре çити тайса илчĕ
Капăр вĕтĕ тутрине.

*Света ВАСИЛЬЕВА.*
Канаш районĕ,
Янкăлч шкулĕ.

## Виç кĕтеслĕ тутăрне

Виç кĕтеслĕ тутăрне
Сарчĕ тухăç уй çине:
Симĕс пурçăн евĕрне,
Шур çиппе тĕрленине.

Ытарма çук сар кунне,
Ăшшине, çуллахине.
Саврăм эп чечеккине,
Улăхра ешернине.

Тӳпепе пĕр танлине,
Кăн-кăвак, ăш куллине,
Сывлăмсем чуптунине,
Çиçĕмпе тăванлине.

Кăчăк туртрĕ ун çеçки:
Телейли, пит илемли.
Пулчĕ пуль ку ĕнерхи –
Тĕлĕкре килекенни.

*Николай ЕРЕМЕЕВ.*
Чĕмпĕр хули.





© *Кристина ВАСИЛЬЕВА* (Елчĕк районĕ, Аслă Таяпа) **ӳкерчĕкĕсем.**



© *Яна БАКИНА* (Сĕнтĕрвăрри районĕ, Хуракасси) ***ӳкерчĕкĕ.***

# Хаваслă 2015 самант

## Икĕ ребус



***Çакăнта ачалăх пирки каланă сăвă йĕркисем вуланĕç.***




***Çакăнта ўкерĕннĕ цифрăсенче, япаласенче тата ытти те тупмалли юмах пытаннă. Тупсăмне тупăр.***

## Сăмахкаçмăш




**Кунта ултă сăмах вырнаçнă. Тăватă саспаллирен тăракан-скерсен пуçламăшĕпе вĕçне çырса хунă. Вĕсене стрелкăсем кăтартнă май вырнаçтармалла.**

•Шведсен паллă йĕлтĕрçи, Олимп чемпионĕ. •Бельгири вĕрсе каламалли сăпрайсен паллă маçтăрĕ, саксафон хатĕрленĕ ăстаçă. •Уçăлтаракан шĕвек. •Библи мифологийĕнчи сăнар, Адампа Еван ывăлĕ. •Сăмахкаçмăш тĕсĕ – … – ворд. •Индонезири утрав.

## «Пĕр сăмах урлă»
### пуçватмăш




**Пуçватмăш кўлепине «марш» сăмаха вырнаçтарнă та ĕнтĕ. Унпа усă курса ыттисене çырса хурăр.**

Амур – Анне – Анод – Бард – Вирт – Ерик – Марш – Нина – Парк – Рема – Сиен – Стод – Сумо – Тахо – Урам – Хван– Акант – Анапа – Вăлча – Вутра – Кавир – Локва – Ракша – Ручка – Сулак – Старт – Тавро – Улăшу – Устав – Гигант – Кудрин – Кторов – Купала – Лившиц – Стресс – Аршинов – Аспирин – Атрибут – Вдовина – Иравади – Квадрат – Тасеева – Урхамах.

## «Тĕнчери тата Чăвашри паллă ўнерçĕсем»
### пуçватмăш




**Тупсăмсене цифрăсенчен пуçласа аялалла çырмалла. Паллă тунă чечеклĕ клеткăсенчи саспаллисене тĕлме тĕл çаврашкасене вырнаçтарăр. Тĕрĕс хуравсем парсан, çаврашкасенче сылтăмалла чăвашран тухнă пĕрремĕш ўнерçĕ-профессионал хушамачĕ вуланĕ.**

**Аялалла:** 1. Арменирен тухнă тĕнчипе паллă ўнерçĕ, Социализмла Ĕç Геройĕ. 2. Чăваш графикĕ, чылай кĕнекене ўкерчĕксемпе илемлетнĕ ўнерçĕ. 3. Канаш районĕнчи Сиккасинче çуралнă график, Константин Иванов ĕçĕсене илемлетме чылай тўпе хывнă ўнерçĕ. 4. СССР халăх ўнерçи, Р. Ролланăн «Кола Брюньон» романне, Н. Гоголĕн «Тарас Бульба» повеçне тата ыт. те илемлетнĕ график. 5. Итали паллă ўнерçи, «Даная» картина автор. 6. Франци ўнерçи, йăла-йĕркери сценăсен, натюрмортсен ăсти. 7. Чăвашран тухнă паллă ўнерçĕ, Харьковри ўнер институчĕн профессорĕ. 8. Чăваш ўнерçи, Константин Иванов ячĕллĕ патшалăх премийĕн лауреачĕ, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ художникĕ, портретист. 9. Чăваш ўнерçин Праски Виттин чăн хушамачĕ. 10. Чăваш ўнерçи, «Акатуй» картина, «Хăмла» триптих авторĕ.

***Юрий ФРОЛОВ* (Шупашкар) *хатĕрленĕ.***